Книжная палата

27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 ФЕВРАЛЬ 6 ЫТЛАРИКУН 23(6774) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Фронтпа ҫӗршыва йывӑҫ материалӗсем те хӗҫпӑшалпа тырӑ пекех кирлӗ

Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӳллӗ наступлени туса пырать. Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсене мӗнпур совет ҫыннисем хӑватлӑн пулӑшса тӑраҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра, пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле, вӑрман хатӗрлекен предприятисенчи работниксем те пысӑк ҫӗкленӳпе ӗҫлеҫҫӗ. Вӑрнар вӑрманпромхозӗпе вӑрман хуҫалӑхӗн, Йӗпреҫ вӑрман хуҫалӑхӗн тата ытти нумай предприятисен коллективӗсем, ҫавӑн пекех вӑрман хатӗрлес ӗҫре малта пыракан Сӗнтӗрвӑрри, Куславкка, Чурачӑк районӗсенчи колхозниксемпе колхозницӑсем, Хӗрлӗ Ҫар хӑвӑрт наступлени туса пыни ҫине ответлесе, вӑрман хатӗрлемелли плана Хӗрлӗ Ҫар кунӗ тӗлне, авиаци валли хырпа хурӑн хатӗрлемелли плана февралӗн 15-мӗшӗ тӗлне тултарма пулчӗҫ. Ҫакӑнпа пӗрлех вӗсем вӑрман хатӗрлекен предприятисенчи мӗнпур рабочисемпе инженерла-техникла работниксене, республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсене вӑрман хатӗрлевӗнче фронтри пек ӗҫлеме чӗнсе калаҫҫӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ, ҫав паха пуҫарӑва ырласа, 1945 ҫулхи февраль уйӑхне кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли, турттармалли плана тултарса ҫитерес тӗлӗшпе фронтри пек ӗҫлемелли уйӑхлӑх тума йышӑнчӗҫ. Вӑрман хатӗрлекен предприятисен коллективӗсем тата нумай районсенчи колхозсем, уйӑхлӑха хутшӑнса, татӑклӑ обязательствӑсем илчӗҫ. Калинино районӗнчи колхозсем, Хӗрлӗ Ҫар кунне плана пурнӗпе те пӗтӗмӗшпех тултарнипе кӗтсе илме пулса, вӑрманта ӗҫлеме ҫынсемпе лавсем кирлӗ таранах уйӑрса янӑ. Халӗ ӗнтӗ вӑрман хатӗрлекен чылай предприятисемпе нумай колхозсем хӑйсен обязательствисене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Улатӑр вӑрман хуҫалӑхӗ кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлесе турттармалли плана ирттерсе тултарнӑ. Кире, Йӗпреҫ вӑрман хуҫалӑхӗсем те плана тултарасси патне ҫывхарса пыраҫҫӗ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи колхозсем плана пӗтӗмпех тултарса ҫитерни хыҫҫӑн та вӑрманта ӗҫлеме пӑрахман. Первомайски, Куславкка, Чурачӑк, Ҫӗмӗрле районӗсенчи колхозсем плана ҫитес кунсенчех тултарса ҫитерме тӑрӑшаҫҫӗ.

Вӑрман хатӗрлекен предприятисемпе колхозсем фронтри пек ӗҫлемелли уйӑхлӑха пурте активлӑн хутшӑнса ӗҫлесен, вӑрман хатӗрлемелли плана пӗтӗмӗшпех тата срокчен тултарма пулать. Анчах та уйӑхлӑх пуҫланнӑранпа пилӗк кун иртрӗ пулин те, предприятисемпе колхозсенчен чылайӗшӗсем кирлӗ пек ӗҫлеме тытӑнманха. Ҫӗмӗрлери механизациленӗ вӑрман пункчӗ, Буинск вӑрманпромхозӗ тата ытти хӑшпӗр предприятисем кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана 60 процент таран ҫеҫ тултарнӑ. Асӑннӑ предприятисен руководителӗсем ӗҫ начар пынине вӑрманта ӗҫлекенсем кирлӗ чухлӗ ҫук тесе ӗнентерме пикенеҫҫӗ. Чӑн та, хӑшпӗр районсем ӗҫпе турттӑм вӑйӗ кирлӗ чухлӗ мобилизацилемен. Анчах та вӑл вӑрман хатӗрлекен предприятисен ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем ҫуккине пӗлтермест-ха. Вӑрман хатӗрлекен предприятисенче чылайӗшӗнче ӗҫ вӑйне тӗрӗс вырнаҫтармаҫҫӗ, ӗҫлекенсем валли лайӑх условисем туса парассишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ, культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе кирлӗ пек йӗркелемен. Вӑрман хатӗрлекен предприятисенчи работниксем хушшинче ӗҫ дисциплини те кирлӗ ӗҫрӗнта мар-ха. Ҫаксене пула вара ӗҫ тухӑҫлӑхӗ начар. Акӑ, сӑмахран, Пинер вӑрман пунктне илер. Унта пӑрлӑ ҫулсемпе йывӑҫ турттарнине мӗнле майпа хисеплесси пирки ку таранччен те калаҫса татӑлман. Ҫавӑнпа вара колхозсемпе вӑрман пункчӗ хушшинче яланах хирӗҫӳ тухать.

Колхозсем те хӑйсен обязательствисене пурте вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ теме ҫук тӑвай. Красноармейски, Сӗнтӗр, Элӗк, Вӑрнар районӗсенчи партипе совет организацийӗсем вӑрманта ӗҫлеме ҫынсем мобилизацилессишӗн кулленех тӑрӑшас вырӑнне ялсоветсемпе колхозсене миҫе ҫын ямалли ҫинчен хутсем ҫырса янипех лӑпланнӑ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ вӑл районсем кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана 50 процент таран кӑна тултарнӑ. Сӗнтӗр районӗнчи Янӑм ялсоветӗнчи «Быстрый», Мӑн Хураҫка ялсоветӗнчи Молотов ячӗпе, Урпаш ялсоветӗнчи Чапаев ячӗпе тӑракан колхозсем январь уйӑхӗнче пӗр кубометр та вутӑ хатӗрлесе турттарман.

Фронтпа ҫӗршыва вутӑпа йывӑҫ материалӗсем ҫителӗклӗн парса тӑмалла тӑвас тесен, вӑрман хатӗрлемелли плана кашни предприяти, район, колхоз тӑрӑх тултарса пымалла, — ҫакӑ пулать те ӗнтӗ фронтри пек ӗҫлемелли уйӑхлӑхӑн тӗп задачи. Вӑл задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртес май, вӑрман хатӗрлекен предприяти руководителӗсен тата партипе профсоюз организацийӗсен вӑрмана пыракан колхозниксене лайӑх кӗтсе илмелле, вӗсене ӗҫлеме тата пурӑнма условисем туса памалла. Ҫавӑнпа пӗрлех ӗҫ вӑйне вӑрман хатӗрлемелли участоксенче тӗрӗс вырнаҫтарса тухмалла. Ӗҫ вӑйне тӗрӗс организацилесе, социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса пымалла.

Райсовет исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем тата колхоз председателӗсем ҫинче пысӑк ответлӑх тӑрать. Вӗсен вӑрман хатӗрлемелли плана кашни колхоз тӑрӑх тултарма май паракан мероприятисем ҫинчен колхозниксем хушшинче сӳтсе-явассине организацилемелле. Вӑрманта ҫуран ӗҫлеме мобилизациленӗ ҫынсене тата лашапа ӗҫлекенсене пурне те ӗҫе кӑлармалла тӑвас пулать. Ӗҫленӗ ҫӗре выльӑх апачӗ тата ҫынсем валли апат-ҫимӗҫ ҫителӗклӗ илсе пымалла. Колхоз правленийӗсен вӑрманти ӗҫе организацилесе пыма ответлӑ ҫынсем уйӑрмалла.

Фронтпа ҫӗршыва йывӑҫ материалӗсем те хӗҫпӑшалпа боеприпассем тата тырӑ пекех кирлӗ. Вутӑсӑр чугун ҫулсем йӗркеллӗ ӗҫлеме пултараймаҫҫӗ, фронт валли хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем турттараймаҫҫӗ. Йывӑҫ материалӗсемсӗр самолетсемпе вагонсем тата хӗҫпӑшалсем тума ҫук. Апла пулсан, вӑрман хатӗрлесе турттармалли плана вӑхӑтра тултарса пыраймани нимӗҫ тискер кайӑкне хӑйӗн йӑвинчех аркатса тӑкас ӗҫе чӑрмав кӳрет. Вӑрман хатӗрлемелли плана срокчен тата пӗтӗмпех тултарни вара ҫӗнтерӳ сехетне ҫывхартма пулӑшать. Вӑрман хатӗрлекен предприятисен руководителӗсен тата партипе совет организацийӗсен ҫакӑн ҫинчен пӗр минутлӑха та манма юрамасть.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 3-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 3-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ХӖВЕЛТУХАҪ ПРУССИРЕ ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ШПИТТЕНЕН, АЙХХОРН, ХАУСХАГЕН, РАЙХЕНБЕРГ, ПЕТЕРСВАЛЬДЕ, ГРОНА, ЗОММЕРФЕЛЬД ятлӑ пысӑк ялсем. ШНАЙДЕМЮЛЬ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ФРОЙДЕНФИР хулипе ШЛОППЕ хулине ҫапӑҫса туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ЯГДХАУЗ, КЛАВИТТЕРСДОРФ, ЗАГЕМЮЛЬ, КВИРИМ, КАРЛСРУЭ, АРНСФЕЛЬДЕ, РУШЕНДОРФ, МЕЛЕНТИН ятлӑ пысӑк ялсем.

ОДЕР ҫинчи ФРАНКФУРТ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, ВИТЦ, ЗОНЕНБУРГ, ЦИЛЕНЦИГ, РЕППЕН, ШТЕРНБЕРГ хулисене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 150 пункта ытла йышӑннӑ. КЮСТРИН хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем вӑрмансенче нимӗҫ ҫарӗсен самаях пысӑк ушкӑнне ҫавӑрса илнӗ те хытӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн пӗтӗмӗшпех аркатса тӑкнӑ, ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: тупӑсем—163, минометсем—55, пулеметсем—167, автомашинӑсем—1.626, мотоциклсем—500, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем—200. 9.450 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен 8.000 вилли ытла выртса юлнӑ.

БУДАПЕШТРА пирӗн ҫарсем хулан хӗвеланӑҫ пайӗнче (БУДАРА) хупӑрласа илнӗ тӑшман гарнизонне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ. 10 квартал туртса илнӗ.

СЕКЕШФЕХЕРВАР хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшмана атакӑласа, 20 километр таран малалла кайнӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—КИШВЕЛЕНЦЕ, ГАРДОНЬ, АДОНИСАБОМ, ПЕРКАТА, ХЕРЦЕГФАЛЬВА, ШАРБОГАРД ятлӑ пысӑк ялсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктра тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Февралӗн 2-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 176 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 21 самолетне персе ӳкернӗ.

ФЕВРАЛӖН 4-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 4-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем КЕНИГСБЕРГ хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре Земланд ҫурутравне тӑшмантан тасатасшӑн ҫапӑҫнӑ. ГРАНЦ хулипе чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—МИХЕЛЯУ, ГРЮНХОФФ, ГАРБЗАЙДЕН, АЛЛЯЙНЕН, ПОБЕТЕН, РЕГЕНЕН ятлӑ пысӑк ялсем. Пирӗн ҫарсем тинӗс хӗрринчи КУРИШЕ НЕРУНГ ятлӑ сӑмсаха тӑшмантан пӗтӗмӗшпех тасатнӑ. Ҫак сӑмсах КУРИШЕ ГАФ заливне Балтика тинӗсӗнчен уйӑрса тӑрать.

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, ЛАНДСБЕРГ хулипе БАРТЕНШТАЙН хулине—ҫулйӗрсен пысӑк узелӗсене тата нимӗҫсен Хӗвелтухӑҫ Пруссин вӑтаҫӗрти районӗсенчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—ҫапӑҫса тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—НОЙ, АССМУНИС, ЗИДДАУ, ЛЕГИНЕН, ДАМЕРАУ, АЛЬБРЕХТСДОРФ, АЙХЕН ятлӑ пысӑк ялсем.

ОДЕР ҫинчи ФРАНКФУРТ хулинчен ҫурҫӗртерехре тата кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, БЭРВАЛЬДЕ, НОЙДАМИ, ЦИБИНГЕН хулисене туртса илнӗ тата халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ. Февралӗн 3-мӗшӗнче ку районра пирӗн ҫарсем тӑшмантан 180 тупӑ тытса илнӗ тата 1.500 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

БУДАПЕШТРА пирӗн ҫарсем хулан хӗвеланӑҫ пайӗнче (БУДАРА) хупӑрласа илнӗ тӑшман гарнизонне пӗтерессишӗн ҫапӑҫнӑ, 12 квартал туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктра тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Февралӗн 3-мӗшӗнче нимӗҫсен 120 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 30 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Кенигсберг хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн стрелковӑй чаҫсемпе танковӑй чаҫсем, артиллери пулӑшнипе, тӑшмана хӑватлӑн пырса ҫапнӑ та ҫав тери хӑвӑрт малалла кайса, Данциг бухти хӗррине тухнӑ. Ҫапла вара Земланд ҫурутравӗ ҫинче кӗрешекен нимӗҫ ҫарӗсен группировкине икӗ пая уйӑрса янӑ. Вӑйлӑрах та вӑйлӑрах пыра-пыра ҫапса, пирӗн ҫарсем Балтика тинӗсӗ хӗрринчи Гранц хулине туртса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗсенче гитлеровецсен виллисем, тӑшман техники тата хӗҫпӑшал нумай выртса юлнӑ. Ҫӗмӗрсе тӑкнӑ тата йӗркерен тухнӑ нимӗҫ чаҫӗсем пӗр-пӗрин хушшинчи ҫыхӑнӑвне ҫухатнӑ. Совет боецӗсем тӑшман ушкӑнӗсене тинӗс хӗррине хӗстерсе лартаҫҫӗ те пӗтерсе тӑкаҫҫӗ. Тӑшманӑн уйрӑм подразделенийӗсем, хирӗҫ тӑма пӑрахса, тыткӑна парӑнаҫҫӗ. Ҫакӑн пек ӗҫсем пулни паллӑ пулнӑ: нимӗҫ салтакӗсем, хӑйсем тыткӑна парӑнас умӗн, хӑйсене ҫапӑҫма хистекен эсэсовецсемпе офицерсене пере-пере пӑрахнӑ.

Куришӗ Гаф заливӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен юханшывсем ҫинче ҫӳремелли 130 суднине тытса илнӗ.

* * *

Белоруссири 3-мӗш фронт ҫарӗсем малалла ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ. Совет чаҫӗсем тӑшманӑн нумай вӑхӑтлӑха тунӑ оборонине татнӑ та Бартенштайн хулинчен ҫурҫӗр енӗпе тата хӗвеланӑҫ енӗпе иртсе кайнӑ, ҫапла вӗсем хулари тӑшман гарнизонӗн каялла чакмалли тӗп ҫулӗсене татнӑ. Тӑшман укреплениӗсене артиллери вӑйлӑн персе ҫӗмӗрнӗ хыҫҫӑн совет пехотинецӗсем атака пуҫласа янӑ. Урамсенче пулса иртнӗ хаяр ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен гарнизонне аркатса тӑкнӑ тата паян тӑшман оборонин вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ пункчӗ пулса тӑракан Бартенштайн хулине туртса илнӗ. Хула гарнизонӗнчи нимӗҫ салтакӗсем хӑшпӗрисем кӑна хуларан тарса тухса ҫӑлӑннӑ. Бартенштайн хули Хӗвелтухӑҫ Пруссири промышленноҫлӑ хула пулса тӑрать. Ку хулара машинӑсем тӑвакан предприятисем тата ытти предприятисем те пур. Пирӗн ҫарсем, тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, ҫавӑн пекех тата Ландсберг хулине туртса илнӗ. Кун каҫиччен темиҫе пин нимӗҫ салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшманӑн 49 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ. Нимӗҫсенчен 8 танк, 23 тупӑ, 140 пулемет, 76 автомашина тата 8 пысӑк склад тытса илнӗ. 600 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Одер ҫинчи Франкфурт хулинчен ҫурҫӗртерехре пирӗн пехотинецсемпе танкистсем, вирлӗн кусса пырса, 20 километр малалла кайнӑ. Ҫулсен паха узелӗсем тата нимӗҫсен тӗреклетнӗ пункчӗсем пулса тӑракан Нойдамм хулипе Бэрвальде хулине туртса илнӗ. Тӑшман ҫӗнӗ резервсем куҫарса панӑ та вӗсене ҫул ҫинчен тӳрех ҫапӑҫӑва кӗртсе янӑ. Хаяр ҫапӑҫура совет чаҫӗсем фронта халь ҫеҫ пырса ҫитнӗ пехотнӑй дивизие аркатса тӑкнӑ. Одер ҫинчи Франкфурт хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем аслӑ вӑрман районӗнче ҫапӑҫаҫҫӗ. Ку вӑрманта шурлӑхсемпе кӳлӗсем питӗ нумай. Оборонӑра тӑма лайӑх вырӑнпа усӑ курса, гитлеровецсем хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Совет чаҫӗсем тӑшманӑн ҫирӗплетнӗ районне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та, ҫитӗнӗве вӑйлатса пырса, Одер шывӗнчен 6 километр хӗвелтухӑҫнерехре выртакан Цибинген хулине туртса илнӗ. Кун каҫиччен ҫапӑҫусенче нимӗҫсен виллисене кӑна шута илсен те, 5.000 салтакпа офицер таран пӗтнӗ.

* * *

Будапештра пирӗн ҫарсем хулан хӗвеланӑҫ пайӗнче (Будӑра) хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкине пӗтерессишӗн ҫапӑҫнӑ. Советсен штурмлакан ушкӑнӗсем, хӑйсене тӗл пулакан баррикадӑсене, минӑсем лартнӑ вырӑнсене, пралук картисене ҫӗнтере-ҫӗнтере, тӑшмана хӗстерсех пыраҫҫӗ. Гитлеровецсенчен темиҫе квартал тасатнӑ. Хытӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн пирӗн подразделенисем промышленноҫпа технологи музейӗн ҫуртне туртса илнӗ. Ку ҫуртран нимӗҫсем хӑйсен оборонин тӗреклӗ пункчӗ туса хунӑ пулнӑ. Нимӗҫсемпе венгерсен 340 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Украинӑри 1-мӗш фронтра нимӗҫсен 42-мӗш армейски корпус штабӗн начальникне Драбих Вехтер полковника тыткӑна илнӗ. Ҫав полковник ҫапла каласа панӑ: «Нимӗҫ командованийӗ, вырӑс ҫарӗсен наступленине чарас тесе, мӗн тума пултарнине пурне те турӗ, анчах та вырӑссен наступленине чараймарӗ. Германи ку вӑрҫӑра аяла пулчӗ ӗнтӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫав тери хӑватлӑ та ӑнӑҫлӑ наступленийӗ вӑрҫӑ пӗтес куна, ҫавӑнпа пӗрлех Германи пӗтсе ларас куна та ҫывхартса килет».

Совет ҫарӗсене нимӗҫсен 242-мӗш батальонӗ пӗтӗмӗшпех хӑйӗн командирӗпе Карл Дреицель капитанпа пӗрлех тыткӑна парӑннӑ. Ҫав капитан ҫапла каласа панӑ: «242-мӗш батальона январь уйӑхӗн пуҫламӗшӗнче турӗҫ, вара ӑна 10 кунтанах фронта ӑсатрӗҫ. Хамӑр участока кайнӑ чухне эпир ҫул ҫинче ҫӗрле пӗр шкул ҫуртӗнче канма чарӑнтӑмӑр. Ҫӗрле ялта шӑв-шав пуҫланчӗ, пӑшал сассисем илтӗнсе кайрӗҫ. Ман салтаксем хӑраса ӳкрӗҫ. Эпӗ вӗсене лӑплантартӑм та лару-тӑру паллӑ пуласса кӗтсе ларма хушрӑм. Ҫав хушӑра пирӗн пата вырӑссем ҫитсе те тухрӗҫ. Вӗсемпе вӑрҫмашкӑн мӗн те пулин тума пирӗн вӑхӑт пулмарӗ. Пӗтӗм батальон вара тыткӑна парӑнчӗ».

Вӑрман хатӗрлевӗнчи фронтри пек ӗҫлемелли уйӑхлӑх

Фронтовой уйӑхлӑха хутшӑнтӑмӑр

КАЛИНИНО. Эльменти Пушкин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем чугун ҫул транспорчӗ валли вутӑ хатӗрлес тата турттарас тӗлӗшпе пыракан фронтовой уйӑхлӑха активлӑн хутшӑнчӗҫ. Вӗсем уйӑхлӑхра райсовет исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ панӑ задание ирттерсе тултарма хӑйсем ҫине обязательство илчӗҫ. Ҫакна май паянхи куна вӑрманта 20 ҫын ҫуран, 8 ҫын лашапа ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсемпе пӗрле колхоз председателӗ Е. Виноградова тата 2 бригадир тухса кайрӗҫ. Ӗҫлекенсем патӗнче пӗрлешӳллӗ столовӑй организациленӗ.

Кулленхи задание ирттерсе тултарассишӗн колхозниксем пӗр-пӗрипе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ.

В. АБРАМОВ.
Колхоз председателӗн заместителӗ.

Вӑрманта ӗҫлес вырӑнне ялта пурӑнаҫҫӗ

КУКЕҪ, февралӗн 5-мӗшӗ. (Телефонпа). Хыркассинчи «Чашлавар» колхозӑн Йӗпреҫ вӑрманпромхозӗнче кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра чугун ҫул валли 400 кубометр вутӑ касса турттармалла. Колхоз правленийӗ вӑрманта ӗҫлеме 4 ҫын уйӑрнӑ.

Вӑрманта ӗҫлеме уйӑрнӑ ҫынсем Йӗпреҫ вӑрманпромхозӗнче халӗ те ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫлеҫҫӗ-ха. Вӗсем лаша апачӗ пӗтрӗ тесе час-часах киле таврӑнаҫҫӗ те 10—12-шер кун пурӑнаҫҫӗ. Колхоз правленийӗ вӑрманта ӗҫлекенсене пулӑшмасть. Ҫавна пула вӑрман касса турттармалли плана ҫуррине те пурнӑҫламан-ха.

Г. ПЕТРОВ.

Пӗтӗм Союзри совхозсенчи агрономсен канашлӑвӗ

СССР-ти Совхозсен Халӑх Комиссариачӗ Пӗтӗм Союзри агрономсен канашлӑвне пухнӑ. Канашлура совхозсемпе трестсен директорӗсем, старши агрономсем тата старши механикӗсем пур.

Канашлӑва нарком П. П. Лобанов юлташ уҫнӑ, вӑл совхозсен иртнӗ ҫулта тунӑ ҫитӗнӗвӗсене палӑртнӑ. Государствӑна тырӑ 1944 ҫулта 1943 ҫулхинчен икӗ хут ҫурӑ ытла панӑ, ытти продуктсене парас тӗлӗшпе те обязательствӑсене ытлашшипех тултарнӑ, выльӑх шучӗ тата унӑн тухӑҫлӑхӗ ӳснӗ. Канашлӑвӑн тӗп задачи—1945 ҫулта совхозсен ӗҫне тата ытларах лайӑхлатас тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене палӑртса хурасси пулать.

Нарком заместителӗ В. С. Балясный хӑйӗн докладӗнче ҫапла каланӑ: совхозсен тӗп задачи—ҫывӑхри икӗ ҫул хушшинче тӗштырӑ, выльӑх апачӗ тата техникӑллӑ культурӑсем акакан ҫӗр лаптӑкне вӑрҫӑчченхи хисепе ҫитересси тата тӗштырӑ туса илессине ӳстересси пулать, тенӗ. Ҫав задачӑна чылай совхозсем пурнӑҫлани ҫинчен каланӑ. Сӑмахран, Краснодар крайӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан совхоз нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑн иккӗмӗш ҫултах вӑрҫӑчченхинчен ытларах ҫӗр акса хӑварнӑ.

Тракторсене юсасси тата машинӑсене юсаса хатӗрлесси ҫинчен наркоматӑн агротехникӑпа механизаци отделӗн главнӑй инженерӗ Казанский юлташ доклад туса панӑ.

Канашлу ӗҫне Лысенко академик, Чижевский, Харченко, Селезнев тата ытти профессорсем те хутшӑннӑ.

Канашлу темиҫе кун хушши пымалла.

(ТАСС).

Совет профсоюзӗсен делегацийӗ Мускава таврӑннӑ

Январӗн 31-мӗшӗнче Мускава Францирен совет профсоюзӗсен делегацийӗ таврӑннӑ. Делегаци шутне ҫаксем кӗреҫҫӗ: ВЦСПС секретарӗ Л. Н. Соловьев—делегаци руководителӗ, Н. А. Гайсенок—суднӑсем тӑвакан промышленность рабочийӗсен профсоюзӗн Центральный Комитечӗн председателӗ, Н. И. Бахгорский—ҫыхӑну работникӗсен профсоюзӗн Центральный Комитечӗн председателӗ, Н. А. Гаврилов — аслӑ шкулсемпе наука учрежденийӗсен работникӗсен профсоюзӗн представителӗ, Т. К. Кошелова—делегаци секретарӗ.

Делегацие Францин Пӗтӗмӗшле Ӗҫ Конфедерацийӗ чӗннипе ВЦСПС янӑ пулнӑ. 1944 ҫулхи декабрӗн 27-мӗшӗнчен пуҫласа 1945 ҫулхи январӗн 24-мӗшне ҫитиччен делегаци Францин промышленноҫлӑ пысӑк 11 центрне пырса курнӑ, авиаци, автомобиль, металлурги, ҫӗркӑмрӑк, суднӑсем тӑвакан, пир-авӑр промышленноҫӗсен тата ыттисен ӗҫӗсемпе те, ҫавӑн пекех чугун ҫул транспорчӗн ӗҫӗсемпе паллашнӑ. Делегаци тата обществӑпа культура организацийӗсен ӗҫӗсемпе паллашнӑ. Делегацие пур ҫӗрте те пысӑк кӑмӑлпа хапӑл туса йышӑннӑ. Франци ӗҫхалӑхӗ совет халӑхне, Хӗрлӗ Ҫара, Сталин Маршала ҫав тери кӑмӑллӑ туни палӑрнӑ.

Делегаци мӗн пурӗ 63 митингпа профсоюз членӗсен пухӑвӗсенче сӑмах тухса каланӑ. Вӑл пухусемпе митингсенче 100.000 ҫын ытла пулнӑ.

Юлашкинчен делегаци Парижри рабочисемпе служащисен 25.000 ҫынлӑ митингӗнче сӑмах тухса каланӑ. Делегацие Франци республикин Вӑхӑтлӑх Правительствин пуҫлӑхӗ те Голль генерал йышӑннӑ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Нумай ачаллӑ амӑшӗсене „Ача амӑшӗн мухтавӗ" ятлӑ орденсемпе тата „Ача амӑшӗсен медалӗ" ятлӑ медальсемпе наградӑласси ҫинчен

(Юлашки. Пуҫламӑшӗ „Чӑваш Коммунин" 22-мӗш номеренче)

Ултӑ ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене «АЧА АМАШЕСЕН МЕДАЛЕ» ЯТЛА I-МЕШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

15. Анастасия Васильевна Николаевӑна—Куславкка районӗнчи Курочкино ял Советӗнчи «Красный Волгарь» колхоз колхозницине.
16. Пелагея Григорьевна **Тимофеевӑна**—Шӑмӑршӑ районӗнчи Пуянкасси ял Советӗнчи «Заря» колхоз колхозницине.
17. Матрена Титовна **Титовӑна**—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Панкасси ял Советӗнчи «Шордан» колхоз колхозницине.
18. Мария Емельяновна **Филипповӑна** — Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуршӑл ял Советӗнчи Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
19. Ольга Яковлевна **Филипповӑна**—Сӗнтӗрвӑрри хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
20. Антонина Степановна **Хлебниковӑна**—Сӗнтӗрвӑрри хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
21. Матрена Хрисановна **Яковлевӑна** — Сӗнтӗрвӑрри хулинчи Судоверфь работницине.

Пилӗк ача ҫуратса пӑхса ӳстернӗ амӑшӗсене «АЧА АМАШЕСЕН МЕДАЛЕ» ЯТЛА II-МЕШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Вафира Шейхулловна **Абдуллинӑна**—Куславкка районӗнчи Кармӑш ял Советӗнчи Куйбышев ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
2. Мария Андреевна **Андреевӑна**—Сӗнтӗрвӑрри хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
3. Вера Матвеевна **Андрюшинӑна** — Канаш хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
4. Мария Васильевна **Березинӑна**—Сӗнтӗрвӑрри хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
5. Александра Григорьевна **Григорьевӑна**—Канаш хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
6. Вера Федотовна **Дмитриевӑна** — Сӗнтӗрвӑрри хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
7. Анфиса Тимофеевна **Жарковӑна**—Куславкка районӗнчи Туканаш ял Советӗнчи «Канаш» колхоз колхозницине.
8. Антонина Ивановна **Кудановӑна**—Сӗнтӗрвӑрри хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
9. Елизавета Ивановна **Лучковӑна**—Сӗнтӗрвӑрри хулинчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.
10. Анисия Никитична **Медведевӑна** — Канаш хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
11. Ольга Николаевна **Уткинӑна** — Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Кукашне ял Советӗнчи Пысӑк Маклашкино шкулӗнчи работницӑна.
12. Александра Филипповна **Филипповӑна**—Канаш хулинчи килхуҫи хӗрарӑмне.
13. Агриппина Григорьевна **Якимовӑна**—Куславкка районӗнчи Курочкино ял Советӗнчи «Красный Волгарь» колхоз колхозницине.
14. Наталия Васильевна **Яковлевӑна** — Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуркасси ял Советӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.
Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1945 ҫулхи январӗн 31-мӗшӗ.

Фронтовиксен ҫемьисене—тӑванла пулӑшу

СӖНТӖР. Шомикри «Колос» колхозра фронтовиксен ҫемьисене пулӑшас ӗҫе лайӑх организациленӗ.

1944 ҫулта колхоз фронтовиксен ҫемьисене 170 пӑт ытла тырӑ, 600 пӑта яхӑн ҫӗрулми, 10 килограмм ҫу, 270 центнер выльӑх апачӗ парса пулӑшнӑ. Кунсӑр пуҫне 125 кубометр вутӑ турттарса панӑ. 3 ҫемьене пурӑнмалли ҫуртсем юсаса панӑ. Халӗ 6 ҫемье валли ҫӗнӗ пӳртсем тума тытӑннӑ тата 5 пӳрт юсаса параҫҫӗ.

Фронтовиксен ҫемьисене пулӑшас ӗҫе татах вӑйлатас шутпа, колхоз малтан тунӑ фонд ҫумне хушса 480 пӑт тырӑ, 20 килограмм ҫу, 6 килограмм ҫӑм, 100 центнер выльӑх апачӗ уйӑрнӑ тата фронтовиксен ҫемьисене 50 кубометр вутӑ турттарса пама йышӑннӑ. Кунсӑр пуҫне районри фонда 20 пин тенкӗ укҫа панӑ. Вӑл шутран 15 пин тенкине колхозниксенчен пуханӑ. Колхоз председателӗ К. Тямин юлташ 500 тенкӗ, колхоз бригадирӗ Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗ И. Иванщиков юлташ 350 тенкӗ панӑ.

Нумаях пулмасть «Колос» колхоз членӗсем районри колхозниксемпе колхозницӑсем патне ҫыру ҫырчӗҫ. Вӗсем районри колхозниксемпе колхозницӑсене фронтовиксен ҫемьисене тата ытларах пулӑшма чӗнеҫҫӗ. Хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пурнӑҫа шеллемесӗр ҫапӑҫакан паттӑр воинсем хӑйсен тӑван килӗнчи ҫемьисемшӗн ан пӑшӑрханчӑр, вӗсемшӗн пӗтӗм халӑх тӑванла тӑрӑшнине туйса тӑчӑр.

А. СОЛОВЬЕВ.

Чӗререн тав тӑватпӑр

(Фронтран килнӗ ҫыру)

Советски районӗнчи Тури Ачакри колхозницӑсене Елизавета Максимовӑпа Е. Потапова юлташсене

Ҫӗнӗ ҫул кунӗнче пире ҫӗнӗ тумтирсем пачӗҫ. Пирӗн чаҫа пынӑ тумтирсем хушшинче эсир ҫыхса янӑ ӑшӑ алшиш-ҫӑлхасен ҫыххисем тухрӗҫ. Вӑл алшиш-ҫӑлхасем ӑшӗнче эпир сирӗн кӗске ҫырусене тупса вуларӑмӑр. Юлташсем мана ҫав парнесемшӗн тав туса сирӗн пата ответ ҫырма хушрӗҫ. Хамӑн юлташсем ҫӗннипе эпӗ сирӗн пата хавасланса ҫак ҫырӑва ҫыратӑп.

Яланхи йӑлапа, чи малтанах, сире, Тури Ачакри колхозниксемпе колхозницӑсене, ырлӑх-сывлӑх сунса, красноармеецла хӗрӳллӗ салам яратпӑр.

Тӑваттӑмӗш ҫул пыракан аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пирӗн ҫире нумай тата темиҫе тӗслӗ тумтирсем улшӑнчӗҫ ӗнтӗ. Кашни хутӗнчех эпир хамӑрӑн совет тылӗнчи ӗҫченсем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемшӗн куллен тӑрӑшнине туятпӑр. Акӑ эсир пирӗн валли лайӑх ҫӑмран типтерлӗ алшиш-ҫӑлхасем ҫыхса янӑ. Кунпа пӗрлех эпир Хусанти фабрикӑра туса кӑларнӑ ҫӑматӑсем, Ивановри текстильщицӑсем ярса панӑ ваткӑллӑ пиншаксемпе шалаварсем илтӗмӗр.

Эпир—танкистсем. Хӗллехи шартлама сивӗсенче хурҫӑ-тимӗр танк ӑшӗнче ларса, хурҫӑ-тимӗр механизмсене тытса пырасси ҫӑмӑл мар. Анчах эпир тумтир начаррипе шӑнса тертленни пулман. Эсир пире пуҫ тупинчен пуҫласа ура тупанне ҫитиччен ӑшӑ тумтирсемпе тумлантарса тӑтӑр.

Сире те, колхозниксене, ҫак ҫулсенче мӗн тери йывӑрлӑхсем тӳссе ирттерме тивнине эпир лайӑх пӗлетпӗр. Нумай чухне пӗр ҫынна темиҫе ҫыншӑн ӗҫлеме тивнине те туятпӑр. Эсир Хӗрлӗ Ҫар валли паракан апат-ҫимӗҫшӗн, тумтирсемшӗн нумай тар тӑкма тивнине боецсемпе офицерсем лайӑх ӑнланаҫҫӗ. Совет тылӗнчи ӗҫченсем Хӗрлӗ Ҫаршӑн нимӗн те хӗрхенсе тӑманни пире фронтра ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума, тӑшмана хӑвӑртрах ҫапса аркатма хавхалантарать.

Эпир хамӑр умра аслӑ ҫӗнтерӗвӗн шевлине, лӑпкӑ та мирлӗ пурнӑҫӑн хӗвелне куратпӑр ӗнтӗ.

Ылханлӑ тӑшман хӑйӗн шӑпи тулса ҫитнине хӑй те лайӑх курать. Анчах нихӑҫан та тӑшман та вилӗм майкӑчне хӑй тӑхӑннине тӗнче историйӗ халиччен курман-ха. Гитлерпа унӑн юнлӑ шайккине майкӑч патне Хӗрлӗ Ҫарпа пирӗн союзниксем хӑваласа сӗтӗрсе пыраҫҫӗ. Нумай вӑхӑт юлмарӗ ӗнтӗ: часах чӑваш хӗрупраҫӗсем ешӗл сак ҫине ларса йӑлкам шурӑ катампирсем ҫине куҫа илӗртекен тӗрӗсем тӗрлӗҫ, вӗсен юрри каллех пирӗн чечекленекен республикӑри вӑрмансемпе ҫарансем тӑрӑх янӑраса кайӗ.

Парнешӗн темӗн пекех пысӑк тав сире. Хӑвӑрӑн чыслӑ ӗҫӗрте малашне татах та пысӑкрах ӑнӑҫусем тума сывлӑх сунатпӑр. Вӑхӑт пулсан пирӗн пата хӑвӑр колхозри ӗҫсем ҫинчен ҫырусем ҫырма ыйтатпӑр.

Пирӗн адрес: Полевая почта 89545—Я.

Н-ски чаҫри танкистсем ячӗпе старши сержант Никита ВОЛКОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Уйăхлăх итогĕсем

ВКП(б) Обкомĕ йышăннă тăрăх, Чăваш республикинчи колхозсенче январĕн 1-мĕшĕпе февралĕн 1-мĕшĕ хушшинче вырăнти удобренисем хатĕрлесе хире кăлармалли уйăхлăх иртрĕ. Нумай колхозсем çав вăхăт хушшинче хăйсен уйăхри заданийĕсене çеç мар пурнăçларĕç, вĕсем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра тислĕк турттарса кăлармалли торф, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли пĕтĕм плана та ăнăçлăн тултарчĕç.

Çак уйăхлăх чылай районсенче ăнăçлăн иртрĕ, тислĕк турттарса кăлармалли уйăхри плана Муркаш районĕ 122,3 процент, Комсомольски район — 115,9 процент, Калинино районĕ — 112,4 процент, Чкаловски район—105,4 процент тултарнă, Красноармейски район—103,5 процент тултарнă, уйăхлăх тата Елчĕк, Чурачăк, Сĕнтĕр, Первомайски, Канаш районĕсенче те тата ытти хăшпĕр районсенче те ăнăçлă иртнĕ. Муркаш, Калинино тата Чурачăк районĕсем питĕ паха удобрени пулса тăракан кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата торф пухмалли задание те ирттерсе тултарнă.

Çав вăхăтрах Улатăр, Пăрачкав, Куваккино, Çĕмĕрле, Куславкка, Тăвай районĕсем уйăхлăха йĕркеллĕн ирттермен. Агротехника мероприятийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе республикăра малта пыракан районсенчен пĕри шутланса тăнă Шупашкар районĕ те уйăхри плана тултарман, çакна нимĕнле сăлтавпа та тÿрре кăларма çук.

Вырăнти удобренисем хатĕрлесе хире турттарас тĕлĕшпе ВКП(б) Обкомĕпе Совнарком панă задание уйрăм районсем пурнăçламанни—парти райкомĕсен, райисполкомсен тата райçĕрĕç пайĕсен руководителĕсем çак ĕç çине çиелтен пăхнинчен килнĕ. Удобренисем хатĕрлесе хире турттарса кăларас ĕçре хĕл чи лайăх вăхăт пулса тăрать. Çак лайăх вăхăта колхоз председателĕсемпе çĕрĕç органĕсен руководителĕсен ахаль ирттерсе ямалла мар. Хăшпĕр районсемпе колхозсен руководителĕсем уйăхлăх ирттернĕ хыççăн вырăнти удобренисем пухас ĕç çине çăмăллăн пăхма пуçланă. Ĕçре çавăн пек лăпланса ларма хăтланнине халех пĕтерсе лартмалла. Кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн колхозлă ялсенче ăмăрту сарăлса, вăйлăланса пырать. Парти организацийĕсемпе вырăнти советсен çав ăмăртăва ертсе пымалла.

Вырăнти удобренисем хатĕрлесе хире турттарса кăларасси 1945 çулта вăйлă тырпул туса илмешкĕн пурнăçламалли чи кирлĕ мероприятисенчен пĕри пулса тăрать. Хире удобрени мĕн чухлĕ ытларах кăларă, пăр, тырă, çĕрулми, пахча-çимĕç тата техникăллă культурăсем çавăн чухлĕ ытларах туса илĕпĕр.

Вырăнти удобренисем хатĕрлеме чарăнмалла мар

Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăхра пирĕн районри нумай колхозсем мухтава тивĕç ĕçлерĕç. Уйăхлăхра район 75.000 лав тислĕк хире кăларнă. Çапла вара уйăхлăх планне 100,3 процент тултарнă. Унсăр пуçне 7850 лав торф хатĕрлесе хире кăларнă. 1591 центнер кĕл, 990 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Фекали, юшкăн нумай хатĕрлесе хире кăларнă.

Услапари «Броневик» колхозра (председателĕ М. Федоров юлташ), «Çутталла» колхозра (председателĕ А. Емельянов юлташ), Папанин тата Калинин ячĕсемпе тăракан колхозсенче уйăхлăх ăнăçлă иртрĕ. Çак колхозсем уйăхлăхра тума палăртнă ĕçсене ытлашшипех пурнăçларĕç. «Броневик» колхоз план тăрăх 4200 лав тислĕк кăлармалла пулнă пулсан, 4500 лав кăларнă. Кунта пĕр пин лав торф хатĕрлемеллеччĕ, вĕсем 1680 лав хатĕрлесе хире кăларнă. «Çутталла» колхоз план тăрăх 4800 лав кăларас вырăнне 6000 лав тислĕк кăларнă. 1000 лав торф вырăнне 2060 лав кăларнă. Çавăн пекех кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата ытти удобренисем нумай пухнă.

«Çутталла» колхозпа «Броневик» колхоз кăçал вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Социализмлă ăмăрту договорĕ тăрăх, вырăнти удобренисем кăлармалли обязательствăсене икĕ колхозĕ те лайăх пурнăçласа пыраççĕ. Хире тислĕк кăларма кунта ятарласа звеносем тунă. Вылăх витисенче тислĕк пухăннă май, вĕсем ăна хире кăларсах тăраççĕ. Торф кăларас енĕпе кунта халĕ те пикенсе ĕçлеççĕ. Кашни кун 15—20 лав кăлараççĕ.

Кăкшăмри «Знамя труда» колхоз тислĕксĕр пуçне темиçе çĕр лав юшкăн хире кăларнă. Чылай колхозсем район центрĕнчен тислĕк турттараççĕ. Сăмахран, Кăмашри колхоз районри учрежденисен картишĕсенчен 800 лав тислĕк, 100 лав ытла фекали турттарнă. Юнтапари «Алмаз» колхоз итем çинчи иртнĕ çулхи улăмсемпе итем юлашкийĕсенчен компост купиисем тунă, унта 500 лав ытла тĕрлĕ тислĕк, хăлчăк тата ытти япаласем пухнă. Çак купа çинех ялта пухăнакан фекалие тата ытти тислĕксене тăкаççĕ.

Анчах та уйрăм колхозсем вырăнти удобренисем пухассипе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ-ха. «Молния» колхозра вырăнти удобренисем пухас ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Кунта уйăхлăх планĕ тăрăх 1800 лав кăлармаллаччĕ, пурĕ те 360 çеç кăларнă. Кайăк-кĕшĕк тислĕкне, кĕл, фекали тата ытти удобренисене те пухма тытăнман.

Тислĕке хире хĕлле кăлармалла. Çапла туни усăллă тата çăмăлтарах та. Хальхи вăхăтра лашасем те, çынсем те пушăрах. Хĕлле кăларнă тислĕк купара лайăх çĕрет.

Торфпа юшкăна та кашни колхозăнах кăлармалла. Юшкăн паха удобрени шутланать, ăна хĕлле кăна турттарма пулать, çулла юшкăн выртакан вырăнсене пырса кĕме те йывăр. Çакна шута илсе, вăл паха ĕçе халĕ туса ирттермелле.

М. ЛОГИНОВ,
Калинино районĕнчи çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Колхозниксем 8 кашкăр тытрĕç

ЭЛĔК. Писĕпри «Рой» колхозри ватă стариксем ухутана çÿреççĕ. 72 çулхи Ф. Алексеев колхозник 2 кашкăр, Отечественнăй вăрçă инваличĕ П. Ходаров 2 кашкăр тытнă. К. Иванов, И. Архипов, Г. Николаев колхозниксем те час-часах ухутана çÿреççĕ. Январĕн 21-мĕшĕнче 6 охотник 4 кашкăр тытнă.

Г. ХАРИТОНОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи парторганизацин конференцийĕ

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ, февралĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Кунта районри парторганизацин конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцире ВКП(б) райкомĕн 1943—44 çулсенчи ĕçĕсем çинчен райком секретарĕ Захаров юлташ отчет туса панă.

Отчетлă тапхăрта районри парторганизаци парти ретне çĕнĕрен 107 çынна илнĕ. Çапах та конференци партие илес ĕç çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ. Уйрăмах колхозниксене парти ретне илесси çителĕксĕр пынă. Партие илнĕ çынсене воспитани парас тĕлĕшпе те кирлĕ пек ĕçлемен, Турханта политшкул уçнă пулнă. Анчах вăл халĕ те йĕркеллĕ ĕçлемест.

Конференцире тухса калакансем ВКП(б) райкомĕ юлса пыракан колхозсемпе сахал интересленни çинчен, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе сÿрĕк ĕçлени çинчен, вырăнти промышленность предприятийĕсене кирлĕ пек ертсе пымани çинчен калаçрĕç, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме сĕнÿсем пачĕç.

Конференци ВКП(б) райкомĕн ĕçне вăтам тесе хакларĕ.

Конференци ВКП(б) райкомĕн çĕнĕ составне суйларĕ. Райком пленумне 21 çын, райком бюроне 7 çын суйланă. Пленумăн организациллĕ ларăвĕ ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма Г. Д. Захаров, иккĕмĕш секретарĕ пулма К. А. Алексеев тата кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма А. С. Степанов юлташсене суйларĕ.

П. ТИХОНОВ.

ВКП(б) Октябрьски райкомĕн пленумĕ

Çак кунсенче ВКП(б) Октябрьски райкомĕн черетлĕ пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум 1944 çулта парти ретне илнин итогĕсем тата çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсем çинчен сÿтсе-яврĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Г. Алексеев юлташ доклад туса пачĕ. Вăл 1944 çулта районри парторганизаци 95 çынна çити ÿсни, 7 çĕрте партин пуçламĕш организацине, 3 çĕрте парти кандидачĕн группине организацилени çинчен пĕлтерчĕ.

Партин «Труд» промысла артельти пуçламĕш организацийĕнче (секретарĕ И. Моисеев юлташ) парти членне 7 çынна, парти кандидатне 13 çынна илнĕ. Çамрăк коммунистсене унта ĕçре сĕнÿсемпе кăтартусем парса пулăшаççĕ, ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтереççĕ. Коммунистсене пурне те политшкула явăçтарнă. Çавăн пекех партин Кутемерти, Чăнкассинчи пуçламĕш организацийĕсем те лайăх ĕçлеççĕ.

Анчах та парти йышне ÿстерес ĕçе пур çĕрте те кирлĕ пек хакламаççĕ-ха. Шĕнерпуçĕнчи (секретарĕ И. Васильев юлташ), МТС-ри (секретарĕ В. Павлов юлташ) пуçламĕш парторганизацисем çулталăк хушшинче те парти членне пĕрер çын çеç илнĕ. Емпĕртри, Çатракассинчи кандидатсен групписем пĕр çынна та парти ретне хутшăнтарман.

Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисенче коммунистсене воспитани парас ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен. Парторганизаци секретарĕсем çамрăк коммунистсен пĕлĕвĕсене ÿстерес ĕçе çителĕксĕр хутшăннă. Коммунистсене парти порученийĕсем паман, панă пулсан та вĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемен. Пухусенче теори ыйтăвĕсене вăхăтран-вăхăта çеç сÿтсе-явнă. Уйрăм пуçламĕш парторганизацисенче парти хуçалăхĕн докуменчĕсене йĕркеллĕ тытмаççĕ.

Комсомолецсем хушшинче ĕçлесси те çителĕклĕ пулса пынă теме çук-ха. Çулталăк хушшинче комсомол ретĕнчен пурĕ те 43 çынна çеç парти ретне илнĕ. ВЛКСМ райкомĕ рекомендаци ыйтса панă ыйтусене час-часах пăхса тухмасăр выртарнă.

Доклад тăрăх пренире 9 коммунист тухса калаçрĕç. Вĕсем пурте, хăйсен ĕçĕсенчи çитĕнÿсемпе çитменлĕхсене палăртса, малашнехи задачăсем çинче чарăнса тăчĕç. Пленум парти ретне илес тата коммунистсене воспитани парас ĕçе лайăхлатмалли мероприятисене палăртса решени йышăнчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа çутĕç пайĕн заведующийĕ М. Римова юлташ доклад туса пачĕ.

Районри çутĕç учрежденийĕсенчен нумайĕшĕсем хăйсен ĕçĕсене кирлĕ пек йĕркеленĕ. Караньялĕнчи, Наратчаккинчи тата Хуракассинчи вулав çурчĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕç планĕсем пур. Асăннă вулав çурчĕсенче стена хаçачĕсем кăлараççĕ, докладсем, калаçусем, вечерсем туса ирттереççĕ.

Çав вăхăтрах Утаçкассинчи, Чĕнерти тата Октябрьскинчи вулав çурчĕсем пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ вырăна лартман. Массăллă хушшинче ĕçлессине те хакламаççĕ.

Ку ыйтупа пренире 7 çын тухса калаçрĕ. Вĕсем районри çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсене хытă критиклерĕç. Юлашкинчен пленум çак ыйтупа тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Н. АНДРЕЕВ.

Çĕнĕ „книжка-малышкăсем"

Чăвашгосиздат юлашки вăхăтра ачасем валли çĕнĕ «книжка-малышкăсем» пичетлесе кăларчĕ. Вĕсен шутĕнче Л. Агаковăн «Медаль» ятлă калавĕ, «Туссем», «Шутласа туп» ятлă нумай ÿкерчĕклĕ кĕнекесем т. ыт. те. Çитес кунсенче С. Шавлын «Киев пионерĕ», Ф. Уярăн «Куçукпа Хураçка», Куçма Чулкасăн «Стаппан пичче» ятлă кĕнекисем тухаççĕ. Издательство планĕ тăрăх 1945 çулта ун пек кĕнекесем 20—25 таран тухмалла.

ÇĔНĔ СПЕКТАКЛЬСЕМ

Чăвашсен академиллĕ Театрĕн вырăс труппи харăсах икĕ спектакль хатĕрлесе çитерне. Пĕри—вырăссен XIX ĕмĕрти паллă драматургĕ Сухово-Кобылин çырнă «Свадьба Кречинского» ятлă комеди. Ăна М. Бурмистров режиссер лартать. Теприн — К. Симоновăн «Так и будет» ятлă пьеси. Вăл паянхи куна кăтартса парать, ăна Е. А. Токмаков режиссер хатĕрлет.

Н. И. ШЕЛЕПИ САВВИСЕМ

Чăвашгосиздатра çак кунсенче чăваш халăх поэчĕн Н. И. Шелепин «Ача-пăча сăввисем» ятлă кĕнеки пичетленсе тухать. Сборника пурĕ 30 сăвă ытла кĕнĕ, вĕсене поэт тĕрлĕ вăхăтсенче çырнă. Сборник валли умсăмахне чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер çырнă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: союзниксен çарĕсем Моншау районĕнче Германи çĕрĕнче тата 1—3 миля малалла кайнă. Хаммер тата Харпершейд хулисене йышăннă. Дрейборн хулине кĕрсе кайнă.

Сен-Вит хулинчен 11 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, чикĕ таврашĕнче, союзниксен чаçĕсем Лосхейм тата Мандерфельд хулисене йышăнса илнĕ. Сен-Витран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Блейальф хулине туртса илнĕ. Бельгипе Люксембург хушшинчи чикĕ патнелле, хĕвелтухăçнелле куçса пыракан союзниксен чаçĕсем Гросскампенберг патне çитнĕ. Çак районра нимĕçсем хăйсен позицийĕсене вăйлă хÿтĕлеççĕ. Хагенауран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен чаçĕсем Рорвейлера тасатнă та, виçĕ кун хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн, Обергофен хулин пысăк пайне йышăннă. Тăшман вăйлă хирĕç тăнине пула тата ейÿ тухнине пула, союзниксен çарĕсем Герлисхейм таврашĕнчен тата Оффендорфран каялла чакнă.

Кольмар хулине йышăннă хыççăн союзниксен чаçĕсем хуларан 4 мильăна яхăн кăнтăр еннелле куçнă. Кольмартан хĕвеланăçнерехре Винцхейма тата ун сывăхĕнчи ытти темиçе пункта йышăннă. Нейбрейзах ятлă тĕреклетнĕ пункт сывăхĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ.

1.000 ытла йывăр бомбардировщик, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, февралĕн 3-мĕшĕнче Берлинри çар объекчĕсем çине 2.500 тонна бомба пăрахнă. Бомбăсем пăрахни ăнăçлă пулнă. Вăл районсенче вăйлă пушарсем тухнă.

400 бомбардировщик ытла, 900 истребитель хÿтĕлесе пынипе, Магдебург хулине тапăннă.

Йывăр бомбардировщиксен тепĕр соединенийĕ Хĕвеланăç Германи çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, Италире, 5-мĕшпе 8-мĕш армисен участокĕнче, çанталăк япăх тăнă, çапах та патрульсем çапăçнă.

1.000 БОМБАРДИРОВЩИК ЫТЛА БЕРЛИНА ТАПАННА

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: американецсен 1.000 бомбардировщикĕ ытла февралĕн 3-мĕшĕнче Берлин хули варринчи вăрçă объекчĕсене тапăннă.

400 йывăр бомбардировщик ытла Магдебург хули тулашĕнчи синтетически горючи заводне тата çав хулари сортировка станцийĕсене тапăннă.

Бомбардировщиксене 900 истребитель ытла хÿтĕлесе пынă.

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтерне: Америка бомбардировщикĕсем февралĕн 3-мĕшĕнче Берлин хули варрине 2.500 тонна фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: американецсен Францири стратегиллĕ авиацийĕн штабĕ пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă: американецсен 1.000 бомбардировщикĕ февралĕн 3-мĕшĕнче Берлин варрине тапăннă чухне 8 бомба нимĕçсен авиаци министерстви çуртĕ çине ÿкнĕ. Нимĕçсен çар министерстви, империски канцеляри, пропаганда министерстви, гестапо штабĕ, çĕрĕç министерстви тата правительствăн ытти çурчĕсем вырнаçнă районра фугаслă бомбăсем 18 тĕлте çурăлса кайнă. Хула варрине пĕтĕмĕшпех пушар ярса илнĕ. 2 миля тăршшĕ те пĕр миля сарлакĕш район çийĕнче çăра тĕтĕм явăнса тăнă. Вокзал сывăхĕнче питĕ пысăк предприятисене чылайĕшне сиенленĕ.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Югославин халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Биелина хули секторĕнче, нумай кун хушши çапăçнă хыççăн, Югославин чаçĕсем Брезово-Поле хулине туртса илнĕ. Çапла вара, нимĕçсен тĕреклетнĕ пункчĕсем пулса тăракан Брчко хулипе Биелина хули хушшинчи çыхăнăва татнă. Тăшманăн вилнисене кăна шута илсен те, 550 салтакпа офицер пĕтнĕ. Пирĕннисем хĕçпăшалпа çар япалисем нумай тытса илнĕ. Брчко хули секторĕнче Челич хули патнелле татса тухма хăтланнă тăшман колоннине çапаласа янă.

Власеница хулипе Дриняч хули секторĕнче çав-çавах йывăр çапăçусем пыраççĕ.

Германири лару-тăру

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Нейтральнăй çĕршывсен дипломатиллĕ представителĕсем çине кăтартса, Лондонри радио çапла пĕлтерет: Германи хĕвелтухăçпе çурçĕр енчи районĕсенчен Берлина çаплах беженецсем нумай пыраççĕ. Вĕсен шучĕ кашни кунах ÿссе пырать. Берлин хулинче нумай хĕрарăмсемпе ачасем килтен киле кĕрсе, ыйткаласа çÿреççĕ. Халăха йышлăн куçарса килнине пула, Хĕвелтухăç Германире администраци органĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçне чарса лартаççĕ. Вăл хуласенчи пĕтĕм власть халь гестаповецсен аллинче. Гитлерла салтаксем эвакуациленĕ çынсен пурлăхне çаратаççĕ. Çавăн пирки те çар влаçĕсем приказ кăларнă. Вăл приказра каланă тăрăх, çаратакан салтаксене пысăк наказани парассипе хăратнă.

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла агентство—Германин информаци бюровĕ—çапла пĕлтерне: «Апат-çимĕç тăратас ыйтупа ĕçлекен нимĕç учрежденийĕсем апат-çимĕç тăратас ĕçе вăрçăн хальхи условийĕсене кирлĕ пек улăштарасси çинчен распоряжени кăларнă».

Çав распоряжение кăтартса панă тăрăх, Германи хĕвелтухăçĕнче хăйĕн ялхуçалăх тĕлĕшпе малта пыракан облаçĕсене çухатни тата пит нумай нимĕçсем хĕвеланăçнелле тарни апат-çимĕç ыйтăвне çав тери çивĕчлетсе янă.

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири каçхине тухнă хаçатсем Берлинри лару-тăру кашни кунах япăхланса пыни çинчен пĕлтереççĕ. Карточкăсемпе илмелли апат-çимĕçе илме май çук. Провинцирен Берлина çĕрулми турттарса пыма пăрахнă. Гитлерла хаçатсем çапла çыраççĕ: «Темиçе çĕр пин беженец пулăшу ыйтма пултараççĕ; вырăнти халăх тумтирсемпе хваттер кăна мар, хăйĕн кулленхи çăкăр паекне те вĕсене памалла».

Швецире тухакан «Афтонтидининген» хаçат, çапла пĕлтерет: «Берлинри халăха хуларан тухса кайма приказ панă. Хулари лару-тăру çав тери йывăр. Темиçе çĕр пин беженец хĕвелтухăç районĕсенчен Берлина çитнĕ. Берлинран чи малтан хĕрарăмсемпе ачасене куçараççĕ. Февралĕн 1-мĕшĕнче Берлинра радиоустановка лартнă автомобильсем çÿренĕ. Вĕсем халăха эвакуацилес тĕлĕшпе кăтартусем панă».

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Германири радиопередачăсем çине кăтартса, Лондонри радио нимĕç çарĕсенчен салтаксем ытларах тарма пуçлани çинчен пĕлтерет. Гитлерла çар влаçĕсем приказ кăларнă. Вăл приказра каланă тăрăх, «хăйсен чаçĕсенчен юлнă салтаксене» пытаракан çынсене йывăр наказани параççĕ, тенĕ. Хальхи вăхăтра, тенĕ приказра, хăйсен соединенийĕсенчен юлнă çар çыннисене пÿлĕмсем пама юрамасть. Çавăн пек çар çыннисен урăх çар чаçĕсене çыранмашкăн çийĕнчех тивĕçлĕ çар комендатурисене каймалла.

ПОЛЬША ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВАРШАВАНА КУÇНА

ВАРШАВА, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Министрсен совечĕ Польша республикин Вăхăтлăх Правительствин тĕп органĕсем Варшава хулинче пулмалла тесе йышăннă постановлени тăрăх, ĕнер Польша столицине—Варшава хулине яланлăхах унта ĕçлеме Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ Болеслав Берут, Министрсен совечĕн Председателĕ Эдвард Осубка-Моравский, вице-премьерсем В. Гомурка тата С. Янош, çавăн пекех тата министрсемпе государство аппарачĕн ертсе пыракан работникĕсем килнĕ.

Çав кунах Варшава хулинче Министрсен совечĕн малтанхи ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура государствăн пур тĕп органĕсене те Варшава хулине куçарасси çинчен, столица халăхне апат-çимĕç тăратасси çинчен тата Варшавăна юсасси çинчен сÿтсе-явнă. Унсăр пуçне тата Польшăн промышленность центрĕсене—Краков, Лодзь хулисене, Домброва бассейнне, Силезие, Кельце хулине тата ытти хуласемпе облаçсене те апат-çимĕç тăратасси çинчен решенисем йышăннă.

Варшава хулине нимĕçсем çав тери ишсе пĕтернĕ пирки тата ишĕлсе çитмен çуртсене тĕпренех юсама кирлине шута илсе, Министрсен совечĕ Варшавăри государство учрежденийĕсем вырнаçмалли çуртсене юсаса пĕтериччен правительство аппарачĕн пĕр пайне вăхăтлăха Варшава тулашĕнче тата Лодзь хулинче вырнаçтармалла тунă.

Çапла ĕнтĕ, 1945 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Польша республикин Вăхăтлăх Правительстви яланах Польша столицинче — Варшава хулинче пурăнса ĕçлет.

БОЛГАРИРИ ÇАР ПРЕСТУПНИКĔСЕМ ПИРКИ ЙЫШĂННА ПРИГОВОРА ПУРНĂÇА КĔРТНĔ

СОФИЯ, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Болгарири çар преступникĕсем пирки (регентсем, патша советникĕсем, министрсем тата депутатсем пулса ĕçленĕ çынсем пирки) халăх сучĕсем йышăннă приговорсене пурнăçа кĕртнĕ.

СОФИЯ, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх сучĕсен пĕрремĕшпе иккĕмĕш составĕн приговорне пĕлтернĕ тĕле, Отечественнăй фронтăн область комитечĕ пуçарса пынипе, çав терп пысăк митинг пулса иртнĕ. Суд палати сывăхĕнчи площадьсемпе урамсенче халăх лăк-тулли пухăннă. Темиçе вунă пин çын пуçĕсем тăррине лозунгсем вĕлкĕшнĕ. Вăл лозунгсем çинче преступниксене вĕлерме тата приговора халех пурнăçа кĕртме ыйтнă. Суд палатине хурлăхлă хура тумтирсем тăхăннă темиçе çĕр хĕрарăм пынă. Вăл хĕрарăмсен упăшкисене фашистсем вĕлернĕ. Вĕсем радиопа паракан приговора тимлĕн итленĕ. Приговора вуласа пĕтернĕ хыççăн Отечественнăй фронтăн область комитечĕн председателĕ митинг уçнă. Митингра Отечественнăй фронта кĕрекен партисен представителĕсем сăмахсем тухса каланă. Пухăннă халăх хушшинче çапла кăшкăрнă сассем илтĕннĕ: «Пур преступниксене те эпир вĕлерме ыйтатпăр», «Преступниксене нимĕнле хĕрхенÿ те пулмалла мар».

БЕЛЬГИРИ ПРАВИТЕЛЬСТВО КРИЗИСĔ

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Брюссельтен пĕлтернĕ тăрăх, Бельги регенчĕ паян иркхине правительство вырăнтан тухнă пирки канашлу туса ирттернĕ. Пьерло премьер-министра регент кĕске вăхăт хушши ĕçсене ертсе пыма ыйтнă.

Пьерло правительство вырăнтан тухасси çинчен заявлени париччен малтан правительствăран министр-социалистсем тухнă пулнă.

Министрсен кабинечĕн паянхи ларăвĕ хыççăн Пьерло социалистсен партийĕн членĕнче тăракан министрсене парламент ларăвĕччен вырăнтах юлма ыйтнă. Парламент ларăвĕ февралĕн 6-мĕшĕнче пулмалла. Асăннă министрсем Пьерло ыйтнипе килĕшнĕ.

Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Афины хулинчен 20 мильăра ларакан Вилларă ЭАМ-па Греци правительствин представителĕсен конференцийĕ уçăлнă.

АФИНЫ ХУЛИНЧИ СУДАН ПРИГОВОРĔ

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 3-мĕшĕнче Афины хулинчи çар сучĕ ЭЛАС майлă ĕçленĕ виçĕ çынна персе пăрахмалла тунă. Вĕсене государствăна хирĕç ĕçленĕ тесе айăпланă. Вĕсене çак сăлтавпа айăпланă: вĕсем «Грецин законлă правительствин салтакĕсене хирĕç, çавăн пекех тата Греци союзникĕсен салтакĕсене хирĕç хĕçпăшал тытса кĕрешнĕ», тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Кашни колхозăн çителĕклĕ таран таса вăрлăх пулмалла

Çуракине хатĕрленес ĕçре колхозăн ылтăн фончĕшĕн, вăрлăхшăн тăрăшасси чи паха та ответлă ĕç пулса тăрать. Вăрлăх çителĕклĕ пулни çуракин ăнăçлăхне татса парать. Çавăнпа та ĕнтĕ вăрлăхшăн халех тăрăшмалла. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем кĕркуннех çителĕклĕ таран вăрлăх уйăрнă, ăна вăхăтра тасатса, çавра аласемпе аласа, алăпа суйласа хунă.

Анчах та вăрлăхшăн пур çĕрте те кирлĕ пек тăрăшмаççĕ-ха. Уйрăм колхозсен руководителĕсем çак вăхăта çитсе те вăрлăх мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илмен. Республикăри чылай колхозсенче вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырра ытти тырăсемпе пăтраштарса янă, вăрлăх фондне уйăрнă тырра акт çырса йĕркелемен. Улатăр районĕнчи «Стахановец» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче вăрлăх валли начар пăрса уйăрнă. Уйрăм колхозсенче вăрлăх фондне начар сыхласа усраççĕ. Çак районри 3-мĕш Пятилетка ячĕпе тăракан колхозра государствăна хирĕçле çул çине тăнă—вăрлăхлăх тырра салатса тата вăрласа пĕтернĕ. Çав вăхăтрах çак колхозăн 200 центнер ытла вăрлăх çитмест.

Вăрлăх фондне вăхăтра хывасси — колхозсен ответлă ĕçĕ. Анчах та районсенчен илнĕ даннăйсем тăрăх, çак ĕç ытла та ерипен пулса пыни курăнать. Ку çеç те мар, чылай районсенче вăрлăх хывса çитерес тĕлĕшпе юлашки эрнесенче пачах та ĕçлеме пăрахрĕç. Сăмахран, январĕн 20-мĕшĕ тĕлне Первомайски районра 85 процент, Советски район 86 процент, Çĕмĕрле районĕ 72,8 процент, Вăрмар районĕ 84 процент, Шăмăршă районĕ 73,3 процент, Куваккино тата Пăрачкав районĕсем 50—60 процента яхăн кăна вăрлăх фончĕ хывнă. Февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне те çак цифрăсем нимĕн чухлĕ те ÿсмен. Уйрăм колхозсене илсен, ĕç татах та начартарах тăрать. Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхоз вăрлăх фондне хывмалли плана пурĕ те 10 процент, «Красный Бор» колхоз—20 процент кăна тултарнă. Шупашкар районĕнчи «Урожай» колхоз вăрлăх фондне 550 центнер вырăнне 70 центнер кăна хывнă. Йĕтĕн тата курăк вăрлăхĕсем хывас ĕç те начар пулса пырать. Йĕтĕн вăрлăхне пĕр район та хывса çитермен. Клевер тата люцерна вăрлăхĕсене чылай районсем 15—20 процент таран кăна хывнă. Çав вăхăтрах районсенчи çĕрĕç органĕсен руководителĕсем вăрлăхлăх клевера сапас, ăна шĕкĕлчес ĕçе кирлĕ пек ертсе пымаççĕ. Республикăра 1000 гектар çинчи клевера çапса шĕкĕлчемен. Районсен тата колхозсен руководителĕсем çак ĕçе вăраха хăварни сиенлине ăнланса илме тивĕç. Çитес сывăх вăхăтрах кашни колхоз, кашни культура енĕпе вăрлăх фондне хывса çитермелле. Çак ĕçе тума пур условисем те çителĕклĕ, ĕçе пĕлсе организацилени кăна кирлĕ. Уйрăм колхозсен руководителĕсем государствăран вăрлăх илессе шанса нимĕн те тумасăр лараççĕ. Çакăн пек шухăшсемпе кĕрешмелле. Халь, вăрçă пынă вăхăтра, государствăран вăрлăх илес шухăшпа ларни сиенлĕ. Кашни колхозăн, хăйĕн колхозникĕсем хушшинче пухса е тепĕр колхозпа улăштарса илсе, кирлĕ таран вăрлăх хатĕрлесе хумалла.

Уйрăм колхозсенче пĕр тĕрлĕ вăрлăх çитмест, тепĕр тĕрли ытларах. Çавăнпа та район руководителĕсем колхозпа колхоз хушшинче вăрлăхлăх тырă улăштарса илессине организацилемелле.

Иртнĕ çул пирĕн республикăри колхозниксем паха пуçару хускатса янăччĕ. Вĕсем харпăрхăй перекетлесе хăварнă тырăран хăйсен колхозĕсене вăрлăхлăх тырă пачĕç. Сăмахран, Шупашкар районĕнчи «Урожай» колхоз членĕ В. Е. Егоров юлташ хăйĕн колхозне 132 пăт тĕштырă вăрлăхлăх пачĕ. Комсомольски районри «Трактор» колхоз членĕсем хăйсен колхозне вăрлăх валли 120 пăт пачĕç. Çак колхозăн председателĕ Т. Иванова юлташ 27 пăт панă. Çак пуçарăва кăçал та колхозсенче анлăн сарса ямалла.

Анчах та вăрлăх фондне хывса çитернипех вăрлăхшăн тăрăшасси пĕтмест-ха. Вăрлăх таса пулни кирлĕ. Вăрлăхсене çумкурăк тата ытти тырă вăрлăхĕсенчен тасатас енĕпе те кирлĕ пек ĕçлемелле. Вăрлăхлăх тырăсене лайăх тасатмасан, вĕсен нÿрлĕхĕ ÿсет. Çавна пула вара тырăсен шăтас пахалăхĕ те чакать. Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра хулăм сийпе хунă, тасатман пăрçан нÿрлĕхĕ 4 уйăхра кĕлетре выртнă вăхăтра 2 процент ытла ÿснĕ. Çак пăрçан шăтас пахалăхĕ те чылай чакнă. Вăрлăхлăх тырăсене сортлас ĕçре тырă тасатакан мĕнпур машинăсемпе, çавăн пекех çавра аласемпе те анлăн усă курмалла. «ВИМ-2» маркăллă сложнăй машинăсем пур çĕрте вĕсемпе анлăн усă курмалла. Çĕрĕç органĕсен тырă тасатакан обозсен ĕçне, вĕсем кашни кунхи задание тата маршрута пурнăçланине куллен контроллесе тăмалла.

Таса та лайăх вăрлăхран кăна вăйлă тырпул туса илме пулать. Анчах та вăрлăхсене тасатас ĕç республикăри чылай колхозсенче çителĕксĕр пулса пырать. Февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем вăрлăхлăх хывнă тырăран 83,4 процентне кăна сортласа тасатнă. Уйрăм районсем унтан та каярах тасатнă. Сăмахран, Етĕрне районĕ 30 процент, Хĕрлĕ Чутай районĕ 37,6 процент, Калинино районĕ 41 процент, Ишлей районĕ 60 процент кăна тасатнă.

Вăрлăха çуракине хатĕрлес ĕçре вăрлăхсене лаборатори витĕр кăларни те пысăк вырăн йышăнать. Çапах та çак ĕç районсенче кирлĕ пек пулса пымасть-ха. Уйрăм колхозсен тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсем çак ĕç çине тивĕçлĕ пек пăхмаççĕ. Кашни колхоз руководителĕ амбара хывнă вăрлăхăн пахалăхĕ çинчен лайăх пĕлсе тăмалла. Вăрлăхăн тасалăхĕ начар пулсан, ăна лайăхлатас тесе, тепĕр хут тасатмалла. Çакăн хыççăн та шăтаслăх лайăхланмасан, вăл тырра ыттипе улăштармалла. Çакăн пек тĕслехсем те тĕл пулма пултараççĕ: тыррăн тасалăхĕ лайăх пулать, анчах та шăтаслăхĕ тивĕçлĕ пек мар. Кун пек тырра юрăхсăра кăларма тăхтамалла. Лысенко академик ертсе пынипе ĕçленĕ наукăпа тĕпчев учрежденийĕсем çакна палăртнă: тыррăн шăтаслăхĕ çителĕксĕрри тĕрлĕ сăлтавсенчен килет. Сăмахран, вăрлăхлăх тыррăн уйрăм пĕрчисен шăтакан варри вилĕ пулать, çавна пула вара шăтаслăх пахалăхĕ те çителĕксĕр пулать. Шăтаслăх çителĕксĕрри нумай чухне тырă пĕрчи канлĕх тапхăрне выртса ирттерменнинчен те килет. Кун пек тырра кирлĕ пек ĕçленĕ хыççăн шăтакан тума пулать. Тырă пĕрчин варри (зародышĕ) вилнине е канлĕх тапхăрĕнче пулнине Лысенко академик меслечĕпе пĕлмелле. Вăл меслете ялхуçалăх специалисчĕсем пĕлеççĕ. Колхозниксене çак меслет çинчен ăнлантарса парасси—ялхуçалăх специалисчĕсен задачи пулса тăрать.

Вăрлăхлăх тырăсене пăсăласран тата вăрласран сыхласси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмалла. Вăрлăх амбарĕсене хуралламашкăн чи шанчăклă колхозниксене уйăрмалла. Çуракине тухиччен вăрлăхăн кашни пĕрчине куç шăрçине сыхланă пек сыхламалла. Вăрлăха вăрланă е салатнă тĕслĕх пулсан, ун çинчен колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе-явмалла, айăплисене çирĕп ответ тыттармалла.

Кашни колхозрах пур йышши культурăсен вăрлăхĕсене те çителĕклĕ таран хатĕрлесси, вĕсене тасатас тата хураллас ĕçе организацилесси партипе совет организацийĕсен, çавăн пекех çĕрĕç органĕсен паянхи чи ответлă задачи пулса тăрать.

Г. ТИМОФЕЕВ,
ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕн заместителĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—57, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00271. Типография № 1. Управления полиграфпро. Заказ № 2. Тираж 16.000 экз.